# Михайлов вулавĕсем

**Чăваш музыка культурин паллă ĕçченне, композитора тата педагога Анатолий Михайлова халалласа «Михайлов вулавĕсем» наукăпа практика конференцийĕ иртрĕ. Мероприятие Чăваш наци конгресĕн «Чăваш Енĕн мухтавлă çыннисем» проектпа килĕшӳллĕн йĕркеленĕ.**

Форума хутшăнакансене Çĕрпӳ районĕнчи А.М.Михайлов ячĕллĕ ача-пăча ӳнер шкулĕнче тарвават кĕтсе илчĕç. «Михайлов вулавĕсене» ирттерме Çĕрпӳ районне ăнсăртран суйламан. Çак тăрăхри Староселка ялĕнче çуралса ӳснĕ вăл. Хăй вăхăтĕнче Чăваш Республикин Халăх çурчĕн ертӳçинче тăрашнă, Чăваш Республикин композиторсен ассоциацине ертсе пынă.

«Михайлов вулавĕсен» пĕлтерĕшĕ пысăкки паллă. Мероприятие хутшăнакансем 30 ытла докладпа паллаштарчĕç. Виçĕ секци ĕçлерĕ. Калаçакансем йышлă пулчĕç: А.М. Михайлов ячĕллĕ ача-пăча ӳнер шкулĕн директорĕ Лариса Федорова, Чăваш Республикинчи композиторсен ассоциацийĕн президенчĕ Николай Зимин, Çĕрпӳ шкулĕн директорĕ Галина Фадеева, Çĕрпӳри историпе тавра пĕлӳ музейĕн ертӳçи Елена Федорова, Çĕрпӳри ӳнер шкулĕн директорĕ Луиза Петрова тата ыттисем. «Республикăри вĕрентӳ тытăмĕн ĕçĕ-хĕлĕн кăтартăвĕсем», «Чăваш культурипе искусствин аталанăвĕ», «Çĕрпӳ районĕн паллă çыннисем» тата ыттисем тĕп темăсем пулчĕç.

Чăваш наци конгресĕн культура комитечĕн ертӳçи, Чăваш наци библиотекин тĕп специалисчĕ Вера Архипова итлекенсене Наци библиотекинче йĕркеленнĕ «Мерчен» юрă-кĕвĕ тĕпелĕн ĕçĕ-хĕлĕ тата культура комитечĕ йĕркелесе янă «Чăваш Енĕн мухтавлă çыннисем» проект çинчен каласа кăтартрĕ, «Чăваш музыки» электронлă нота коллекцийĕпе паллаштарчĕ. Виртуаллă курава Анатолий Михайловăн хайлавĕсен пуххине, нота кăларăмĕсене кĕртнĕ. Композитор пултарулăхĕнче юрă жанрĕ тĕп вырăн йышăнать. Вăл 700 яхăн юрă кĕвĕленĕ, вĕсем авторăн вунă кĕнекинче пичетленнĕ. Композиторăн вĕрсе каламалли инструменсен оркестрĕ валли çырнă, фортепианăпа тата сĕрме купăспа каламалли хайлавсем те пур.

Тĕллпулура çавăн пекех Чăваш наци конгресĕн культура комитечĕн пайташĕ, «Телей» халăх фольклор ушкăнĕн ертӳçи Наталья Арсентьева Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ районĕсенче çуралса ӳснĕ паллă çынсемпе паллаштарчĕ. Çак йышра Альберт Канаш сăвăç, публицист, чăваш чĕлхи тĕпчевçи Николай Золотницкий этнограф, Анатолий Михайлов, Аристарх Орлов-Шуçăм, Александр Сергеев композиторсем тата ыттисем. Наталья Витальевна Ираида Вдовина çинчен те тĕплĕ каласа пачĕ.

**Вера АРХИПОВА,**
**Чăваш наци конгресĕн культура комитечĕн ертӳçи.**